Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

10 (7971) № * Юн кун, 2012 çулхи нарăс (февраль) уйăхĕн 8-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

## Ыттисемшĕн ырă тĕслĕх

***Сăн ӳкерчĕкре эсир район администрацийĕн гражданла оборонăпа чрезвычайлă лару-тăру секторĕн ертсе пыракан специалистне Геннадий Юрьевич Любимова куратăр. Вăл тăрăшуллă специалист пулнипе пĕрлех обществăлла ĕçсене те активлă хутшăнать, ытти çамрăксемшĕн вара ырă тĕслĕх. Геннадий Юрьевич – çамрăксен районти суйлав комиссийĕн членĕ, депутатсен районти Пухăвĕн çамрăксен парламенчĕн членĕ. Активлă çамрăка районти мероприятисенче кăна мар, республикăри тата ун тулашĕнчи форумсенче те курма пулать. Тĕрлĕ мероприятире анлă тавракурăмлă яш район чысне хӳтĕлет.***

**Р. ИЛЛАРИОНОВА сăн ӳкерчĕкĕ.**

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн стипендиачĕ



## Демократи тата патшалăх пахалăхĕ

«Новости» РИА çапла пĕлтерет: Раççей Президенчĕн кандидачĕ, премьер-министр Владимир Путин хăйĕн программăллă черетлĕ статйине çĕр-шыври демократие тата патшалăх йĕркелĕвне халалланă.

Унччĕнхи статьясенчи шухăшлавсене те В. Путин суйлав умĕнхи программăпа çыхăнтарнăччĕ. Пĕрремĕшĕ – «Россия сосредотачивается – вызовы, на которые мы должны ответить» – суйлав умĕнхи программăн ум сăмахĕ. Унта Правительство пуçлăхĕ 2012 çулхи суйлава кандидат пулса тухма мĕншĕн килĕшни пирки каласа пачĕ. Иккĕмĕш статьяра В. Путин хăйĕн шухăшĕсене наци ыйтăвĕсем пирки пĕлтерчĕ. Виççĕмĕшĕ – экономика тĕллевĕллĕ пулчĕ.

Тăваттăмĕш статьяра В. Путин общество интересĕсене хӳтĕлессипе патшалăх ĕç-хĕлне хăй епле курнипе паллаштарать. Ун шучĕпе кунашкал патшалăха демократисĕр йĕркелеме çук. Демократи вара çынсем уншăн ĕçлеме хатĕр çĕрте çеç вăй илейрет.

Премьер шухăшĕпе иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсем пуçламăшĕнче демократи хуçаланăвĕн ялавĕ айĕнче Раççей паянхи пурнăç ыйтакан çĕр-шыв шайне лараймарĕ. Çавна пула тĕрлĕ «клансемпе» «элитăсен» ушкăнĕсем хушшинчи кĕрешӳ вăй илчĕ. Рядовой ĕçченсен интересĕсем кун йĕркинчен тухса ӳкрĕç. Çакăн сăлтавĕ, В. Путин шучĕпе, «коммунизм тытăмĕнчен» тухнă çынсем хăйсен шăпипе хуçа пулма вĕрейменни. Йывăр çулсемпе иртсе çĕр-шыва лачакаран туртса кăларма пултартăмăр. Ăна вăй парасси – кун йĕркинче тăракан ыйту.

«2000-мĕш çулсенче пурнăçа кĕрсе пынă политика халăх сĕнĕвне тăтăш малта тытса пынипе пулнă пулăм. Çакна ку таранччĕнхи кашни суйлав кăтартса пачĕ, – тет В. Путин. – Пирĕн общество активлăланчĕ, ответлăха ытларах туйма пуçларĕ. Çак лару-тăрура пирĕн демократи механизмне çĕнетмелле. Ку çĕнетӳре общественность активлăхĕ мала тухмалла».

Политика системине йĕркеленĕ чух унăн социаллă ушкăнсен интересĕсене вăхăтра çутатассине тĕп вырăнта тытмалла, вĕсене халăхпа сӳтсе явмалла.

В. Путин шухăшĕпе çĕршывра интернет-демократие аталантармалла. Çапла тусан çеç уйрăм çынсем хăйсен шухăшĕсене влаç патне çитерме пултараççĕ.

Вырăнти самоуправлени кашни çыншăн «утăмри влаç органĕ» пулса тăмалла. Вĕсен виçесĕр пысăкланмалла мар. Çынсен кулленхи ыйтăвĕсене татса пама хатĕр пулмалла. В. Путин шухăшĕпе пĕчĕк бизнесăн пĕтĕм налукне муниципалитетра хăвармалла.

Коррупцие пĕрле кĕрешсен çеç çĕнме пулать. Влаçпа пурлăха пайлани çеç çителĕксĕр. Ĕç тăвакан влаçа халăх енчен тĕрĕслессине тĕп вырăна кăлармалла.

– Эпир конкретлă йышăнусем сĕнетпĕр. Вĕсене практикăлла пурнăçа кĕртни халăх влаçне – демократие – таса та тӳрĕ пĕлтерĕшлĕ йĕркелеме май парать. Çапла туни кăна Раççей Федерацине тăнăç аталанупа малалла кайма пулăшĕ, – вĕçлет В. Путин хăйĕн калаçăвне.

Çур акие хатĕрленсе

## 30 процент йӳнĕрех

“Regnum” ИА пĕлтернĕ тăрăх çывхаракан çур акие ăнăçлă ирттерме сĕрмелли-çунтармалли материалсен хакĕ курттăм хакран 30 процент йӳнĕрех пулмалла. Çĕр ĕçченĕ патне çăмăллатнă майсемпе çитекен топливо калăпăшĕ çав вăхăтрах иртнĕ çулхинчен 10 процент ӳсмелле. Çакăн пирки Тамбовра выльăх-чĕрлĕх отраслне аталантарассипе ирттернĕ канашлура Раççей Федерацийĕн Правительствин пуçлăхĕ В. Путин каланă.

«Эпир хамăр çĕр-шыври нефть компанийĕсемпе калаçу ĕçĕсем ăнăçлă ирттертĕмĕр. Хаксем чакарасси пирки килĕшӳ пур. Вăл 2011 çулхи раштавра çĕр-шыври вăл е ку регионта йĕркеленнĕ сĕрмелли-çунтармалли материалсен хакĕнчен тухса тăрĕ. Йӳнетӳ çур аки валли кирлĕ кашни литр бензинпа дизель топливишĕн 16 тенкĕ ытларах – паянхи ваккăн сутмалли хакран 2 хута яхăн пĕчĕкрех – йӳнĕ пулĕ», – тенĕ Владимир Путин. Çавăнтах вăл çăмăллатнă хаксемлĕ топливăн калăпăшĕ кăçал пĕлтĕрхинчен 10 процент ытларах пулассине пĕлтернĕ.

Налук инспекцийĕнче

## Декларацисем тăратмалла

Уйрăм çынсем налук декларацийĕсем тăратассин йĕркипе вăхăчĕсене Раççей Федерацийĕн Налук Кодексĕн 227–229 статйисенче палăртнă. Çапла вара 2011 çулшăн уйрăм çынсен тупăшĕсем пирки декларацисене 2012 çулхи апрелĕн 30-мĕшĕнчен кая юлмасăр тăратас пулать.

Çулталăк хушшинче çынсем тĕрлĕ енлĕ тупăш илме пултарнă: çурт-йĕр сутса, тара парса, лотерейăпа выляса илсе т. ыт. те. Çакă пĕтĕмпех тупăш шутне кĕрет. Декларацие найм мелĕпе ĕçлекен ют çĕр-шыв çыннисем те тăратма тивĕç. Çавăн пекех ку уйрăм предпринимательсене, хăйсем тĕллĕн ĕçлекен нотариуссене, адвокатсене те пырса тивет.

2012 çулта декларации кампанийĕ апрелĕн 30-мĕшĕччен пырать. Çав вăхăтрах уйрăм çынсем налук вычечĕпе усă курас теççĕ пулсан, 2012 çул хушшинче 2009, 2010 тата 2011 çулсемшĕн 3-НДФЛ формăпа налук декларацийĕсем тăратма пултараççĕ.

**Е. АРСЕНТЬЕВА,**
**налук инспекцийĕн пай пуçлăхĕ.**

Культура хыпарĕ

## Ялти артистсем савăнтараççĕ

Районта «Чечеклен, юратнă Муркаш ен» ятпа халăх пултарулăх коллективĕсен фестиваль конкурсĕ пырать. Çавна май вăл январĕн 31-мĕшĕнче Ильинка ял тăрăхĕнче иртрĕ. Юрă-ташă ăстисен пултарулăхĕпе паллашма район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев та кăмăл турĕ. Вăл хăйĕн шухăш-кăмăлне палăртрĕ, ăнăçусем сунчĕ.

– Эсир халăх йăли-йĕркине упранипе пĕрлех район экономикипе социаллă аталанăвне пысăк тӳпе хыватăр, – терĕ Ростислав Николаевич пухăннисене тав тунă май.

Культура ĕçченĕсем халăх валли тĕрлĕ информаци йĕркеленĕ. Кунта пухăннисем Б. Гузовский пурнăçĕпе, пултарулăхĕпе; И. Каргин хатĕрленĕ «Душа моя, Ильинский край» сăн ӳкерчĕксен куравĕпе паллашма пултарчĕç. Вăрманкассинчи Культура çурчĕ çумĕнчи драма коллективĕ (ертӳçи Э. Бронина) куракан умне Н. Айзман пьесси тăрăх «Пуçа килсен пушмак» камит кăларчĕ. Тренккăри Культура çурчĕ çумĕнчи юрăпа ташă ансамблĕ (ертӳçи Н. Чернова) тĕрлĕ юрă-ташăпа савăнтарчĕ. Апчарти Культура çурчĕ çумĕнчи пултарулăх коллективĕн (ертӳçи Б. Леденцов) артисчĕсем шӳтсемпе такмаксемлĕ интереслĕ программăпа савăнтарчĕç.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Кĕскен

## Суйлава хатĕрленсе

РФ Президенчĕн суйлавĕччен 25 кун юлчĕ. Районти суйлав комиссийĕнчен пĕлтернĕ тăрăх 5 суйлав участокĕнче веб-камерăсем вырнаçтарнă, 2 спутник антенни ĕçе кĕртнĕ. Çак эрнере участоксенчи суйлав комиссийĕсене йĕркелеççĕ.

## Старт – вырсарни кун

Вырсарни кун, февралĕн 12-мĕшĕнче, пирĕн районта та, мĕн пур çĕр-шыври пекех, «Раççей йĕлтĕр йĕрĕ - 2012» чупу иртет.
Çак кунах пирĕн йĕлтĕрçĕсем Социализмла Ĕç Геройĕ Е. Андреев парнисене çĕнсе илессишĕн те ăмăртаççĕ.

## Тăххăрмĕшсен пĕлĕвне ниме пăхăнмасăр хаклаççĕ

Экзаменсем çывхараççĕ

Районти пур шкулта та выпускниксене – 9 тата 11 класран вĕренсе тухакансене – экзаменсене хутшăнтарма хатĕрленес тапхăр пырать. 11-мĕшсене хумхантаракан тĕп ыйту пĕтĕмĕшле патшалăх экзаменĕсем тытасси пулсан, 9-мĕшсене – патшалăх аттестацийĕ витĕр тухасси. Вĕсен пĕлĕвне вара кăçал ниме пăхăнса тăман хак паракан механизмпа (механизм независимой оценки знаний) усă курса хаклаççĕ.

9-мĕшсен тăватă экзаменран сахал мар, пилĕк экзаменран ытла мар тытмалла пулать. Пирĕн районтисемшĕн математика, вырăс чĕлхи тата чăваш чĕлхи – обязательнăй экзаменсем шутланаççĕ. Кăçал экзаменсене икĕ майпа тыттараççĕ: йăлана кĕнĕ пек (традиционная форма) тата контрольпе висе материалĕсемпе (КИМ).

Пĕлтĕр экзамен ĕçĕсене хаклакан предмет комиссийĕсем, конфликт комиссийĕсем районти педагогсенчен тăнă пулсан кăçал çак комисси членĕсене ЧР Вĕрентӳпе çамрăксен политикин министерстви йĕркелесе çирĕплетет. Тепĕр майлă каласан çапла майпа пĕлĕве хакласси ниме пăхăнманлăхпа çыхăнса тăрĕ. Хальхи вăхăтра ку енĕпе ĕçсем пыраççĕ.

Экзамен тытма пурĕ 14 предметран суйласа илеççĕ. Маларах обязательнăй виçĕ экзамен пирки каларăмăр, апла ыттисене тепĕр вун пĕр предметран суйласа илмелле. Шкулсенче халĕ шăпах экзаменсем суйласа илессипе тимлеççĕ. Ку ĕçе педагогсем те, ачасем те, вĕсен ашшĕ-амăшĕсем те хутшăнаççĕ. Çапла майпа район администрацийĕн вĕрентӳ пайĕнче даннăйсен базине йĕркелес ĕç те пырать.

Кăçал 9-мĕш класран вĕренсе тухакансем пурĕ 387-ĕн. Вĕренӳре лайăх ĕлкĕрсе пыракансен экзаменсене çĕнĕ формăпа тытма тăрăшмалла. Мĕншĕн тесен экзаменсем хыççăн алла илнĕ свидетельствăпа вĕсем хăйсен пĕлĕвне ытти вĕренӳ учрежденийĕсенче те ăнăçлă тăсма пултараççĕ.

Экзаменсем пирки ыйтусем пулсан район администрацийĕн вĕрентӳ пайне 62-0-92 е 62-4-33 номерсемпе шăнкăравласа пĕлме пултаратăр.

**З. ДИПЛОМАТОВА,**
**район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн пуçлăхĕ.**

Юбилей

## Саламлатпăр



Пирĕн юратнă аттене, кукаçие, маçака, хăтана, савнă мăшăра – Çатракасси ял тăрăхĕнчи Шупуç ялĕнче пурăнакан **Юрий Георгиевич ПЕТРОВА** сумлă юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Вăрăм ĕмĕр, телейлĕ кун-çул, çирĕп сывлăх сунатпăр. Эс пурри – пирĕншĕн телей, тĕрек, шанăç.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, ывăлĕпе кинĕ, хăтисемпе тăхлачисем, мăнукĕсем.**

РФ Президенчĕн суйлавĕ умĕн

# «Бизнес еннелле 100 утăм тумалла»

**Раççей çитес çулсенче бизнес ĕç-хĕлне йĕркелесе пырассин условийĕсем енĕпе 120-мĕш вырăнтан 20-мĕш вырăна хăпарса çитмелле. Çапла пĕлтернĕ РФ премьер-министрĕ Владимир Путин Перекет банкĕпе Диалог Тройкки ирттернĕ 2012 çулхи Раççей Форумĕнче.**

Чăн пурнăçра инвесторсем тĕлĕшпе вăл çапла тума пулать. Энерги перекетлекен системăсемпе çыхăнассин срокĕ 4 хут кĕскелмелле; бухгалтер налук отчечĕсене хатĕрлеме хальхинчен 3 хут сахалрах вăхăт иртерĕ; груз турттаракан фура таможня урлă 7 хут хăвăртрах каçса кайма пултарĕ; объект тума тытăнма ирĕк илме вăхăт 5 хут сахалрах кирлĕ пулĕ, тĕрлĕ документ хучĕсене 3 хут сахалрах хатĕрлемелле пулĕ. Правительство пуçлăхĕ палăртнă тăрăх аталану стратегине 3 принцип татса парĕ. Пĕрремĕшĕ – бизнесăн тӳр кăмăллăхĕн енĕ.

«Ытларах чухне предпринимательсем тӳр кăмăллă пулманнипе патшалăх тĕрлĕрен надзорăн, тĕрĕслевĕн, чарăвăн, килĕштермеллин тата сахал мар отчетсем хатĕрлемеллин майĕсемпе усă курать. Çавна пулах вара саккун нормисене пăхăнса ĕçлекен предприниматель йĕркеллĕ аталанаймасть», – палăртнă вăл.

В. Путин шучĕпе иккĕмĕш принцип – тĕнче практикипе усă курасси, лайăххине, хăйсен эффективлăхне кăтартса панине анлăн пурнăçа кĕртесси. Кунсăр пуçне инвестора мĕн кирли пирки чиновникăн пуç ватмалла мар. «Таможня, налук, административлă тата ытти процедурăсем тĕлĕшпе предпринимательсем хăйсен требованисем сăлтавлама тивĕç. Йĕркеллĕ, ĕçлĕ лару-тăру туса хурасси вăл – патшалăхăн, бизнесăн тата обществăн партнерла проекчĕ», – тенĕ В. Путин.

# Пире вĕрентме кирлĕ мар

Юлашки вăхăтра Америка уйăрса панă укçа-тенкĕпе ирттерекен митингсем урлă пире, суйлавçăсене, суйлав мĕнле ирттермеллине вĕрентни тарăхтармах пуçларĕ. Пирĕн хамăрăн та пуç пур вĕт-ха. Эпир, суйлавçăсем, Америка посольствинчен инструктажсем памасăрах камшăн сасăламаллине, кама Президента суйламаллине хамăрах палăртма пултаратпăр.

Кун пек «консультацисем» мĕн патне илсе çитерме пултарнине эпир курман-пĕлместпĕр мар ĕнтĕ. Горбачевпа Ельцинăн çакăн пек «консультацийĕсем» хыççăн тĕнчери чи пысăк та вăйлă çĕр-шыва аркатрĕç кăна. Раççей тĕлĕшпе те халĕ Америка çав политикăнах тытса пырать. Пурне те пĕр-пĕринпе вăрçтарса-хирĕçтерсе пĕтересшĕн, çĕр-шывра анархи туса хурасшăн.

Америкăшăн пулсан кирек кам Президента суйлантăр, анчах та В. Путин мар. Мĕншĕн тесен вăл Президента суйланас пулсан американецсем патне инструкци патне çӳрес çук, Барак Обама та Владимир Путина ун чухне хул пуççирен аллипе лăпкайрас çук. Шăпах çапла тума кăмăллать та-ха вăл хăйĕнпе килĕштерекен политик-юлташĕсене.

Пирĕн тăрăхра суйлав итогĕсене фальсификацилеме е улталаса кăтартма май çук тесе шухăшлатăп. Кирек хăш комисси членĕ те халăх шанăçĕ çине «сурса» ултав çулĕ çине тăрас çук пулĕ. Суйлавçăсем камшăн сасăласси вара – кашнин хăйĕн ирĕкĕ, ăна тума пире чикĕ леш енчен вĕрентни кирлех мар.

**А. ИВАНОВ,**
**депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ.**

# «Пире революци кирлĕ мар»




***Февралĕн 4-мĕшĕнче Мускаври Асăну тăвĕ çинче "Нам есть, что терять" лозунгпа митинг иртнĕ. Влаçрисем митинга 15 пин çын тухассине палăртнă. Чăннипе вара кунта 138 пин çын пуçтарăннă.***

***Митинга хутшăнакансем çĕр-шыва аркатма памастпăр, пире революци кирлĕ мар тенĕ. Çынсен аллисенче «Путин, мы с тобой!», «Путин – народный президент» текен лозунгсем чылай курăннă.***

***Раççей премьер-министрĕн пресс-секретарĕ Дмитрий Песков митинга халăх йышлă тухнăран Владимир Путин пĕрремĕш туртах çĕнтерессине палăртнă.***

## Цитата:

Юлашки 10 çул хушшинче Чăваш Енре, пĕтĕмĕшле çĕр-шыври пекех, ачасем çураласси ӳсме тытăнни палăрать. Ку вăл демографи тĕлĕшĕнчи лару-тăрăва шайлаштарас, пурнăç условийĕсене тата çынсен сывлăхне лайăхлатас енĕпе патшалăх тытса пыракан политикăпа çыхăннă.

Республикăра çемьесенче иккĕмĕшпе хыççăнхи ачасем çураласси ӳсет. Сăмахран, юлашки 5 çул хушшинче кун пеккисен шайĕ 6 процент ӳснĕ. Çакă вăл чи малтанах çамрăк çемьесен пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсен ыйтăвне лайăхрах татса парассипе çĕр-шыв тата республика ертӳçисем çине тăрса ĕçлесе пынипе çыхăннă. Ку цифрăсем хыççĕнче – çут тĕнчене килнĕ 1676 пепке шăпи. Вĕсем хăйсен ашшĕ-амăшĕшĕн тата пиччĕшĕсемпе аппăшĕсемшĕн кĕтнĕ ачасем пулса тăнă.

Федераллă тата республика шайĕнче тунă йышăнусем – ача амăшĕн (çемье) капиталĕ тата ăна çуллен индексацилесе пыни, республикăри ача амăшĕн капиталĕ, нумай ачаллă çемьесене çурт-йĕр çавăрма çĕр участокĕсем тӳлевсĕр уйăрса пани тата ытти мерăсен тĕп тĕллевĕ – кун пек çемьесен шутне çулсерен ӳстерсе пырасси.

**Г. ЧЕРНОВА,**
**ЧР юстици министрĕн çумĕ, ЗАГС пайĕн пуçлăхĕ.**

# Контрактпа службăна кайма

Яш-кĕрĕм валли

Чăваш Республикинчи Çар комиссариачĕн Муркаш тата Элĕк районĕсенчи пайĕ 2012 çулта çул çитнĕ яшсене контрактпа çар службине кайма йыхравлать. Суйласа илмелли çук мар. Сире çак çар чаçĕсем кĕтеççĕ: 28-мĕш уйрăм мотострелковăй бригада (Екатеринбург), 23-мĕш уйрăм мотострелковăй бригада (Самара облаçĕ), 15-мĕш уйрăм мотострелковăй бригада (Самара облаçĕ), 21-мĕш уйрăм мотострелковăй бригада (Оренбург облаçĕ), 385-мĕш артиллери бригади (Пермь), 473-мĕш вĕренӳ центрĕ (Свердловск облаçĕ), 12-мĕш инженери бригади (Пушкăрт Республики), ятарлă тĕллевлĕ 3-мĕш бригада (Тольятти), пурлăх тĕлĕшпе тивĕçтерекен 105-мĕш бригада (Самара облаçĕ), 7-мĕш уйрăм танк бригади (Челябинск облаçĕ), Тинĕс-çар флочĕн чаçĕсем (шыв çийĕн тата шыв айĕпе çӳрекен карапсем), сывлăш-десант çарĕсем (ятарлă тĕллевлĕ пур бригадăсем, дивизисем тата полк), Шалти ĕçсен министерствин шалти çар чаçĕсем, Кăнтăр çар округĕн чаçĕсем, 201-мĕш çар базин чаçĕсем (Таджикистан Республики).

Контрактпа службăра тăракансене тӳлевсĕр медицина пулăшăвĕпе, тумтирпе тивĕçтереççĕ, 3 хутчен тӳлевсĕр апатлантараççĕ. Çавăн пекех вĕсене пурăнмалли çурт-йĕр параççĕ. Çар тивĕçне контрактпа пурнăçлакансен тӳлевсĕр майпа вăтам тата аслă пĕлӳ илме май пур.

Кăçалхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса контрактниксен ĕç укçи 2,5–3 хут ӳсрĕ. Ку вăл çавна пĕлтерет. Хальхи вăхăтра тип çĕр çинчи (сухопутный) çарсен рядовойĕ 25 пин тенкĕрен, сывлăш-десант çарĕсен рядовойĕ 30 пин тенкĕрен, Тинĕс-çар флочĕн матросĕ 35 пин тенкĕрен кая илмест. Должноçа, звание, ăçта службăра тăнине кура ĕç укçи шайĕ те ӳссе пырать.

Кандидатсем тĕлĕшпе требованисем çакăн пек: Раççей çар службинче пулни, ӳсĕм шайĕ – 19 çултан тытăнса 30 çул таран, 11 класран кая мар вĕренни, сывлăх тĕлĕшпе службăра тăма юрăхлă, судпа айăпланманни.

Кунпа пĕрлех гражданскине профессиллĕ вăтам пĕлӳ программипе вĕренме Раççей Оборона министерствин çар вĕрентĕвĕн заведенийĕсене кайма суйласа илеççĕ. 2 çул та 10 уйăх вĕренмелле пулать. Курсантсене мĕнле ĕлкĕрсе пынине кура уйăхсерен 15 пин тенкĕ е ытларах та стипенди тӳлеççĕ. Вĕренекенсене казарма еврĕпе общежитисене вырнаçтараççĕ. Авланнă курсантсене вĕренӳ заведенийĕн тулашĕнче пурăнма ирĕк параççĕ. Курсантсене кунне 3 хут тӳлевсĕр апатлантараççĕ, тумтирпе тивĕçтереççĕ. Çуллахи вăхăтра 30 талăк, хĕлле 15 талăк отпуск параççĕ.

Вĕренме кĕнĕ курсантсемпе вĕренсе тухсан 3 çул хушши службăра тăрасси пирки контракт çыраççĕ. Вĕренсе тухнисене «сержант» звани, профессиллĕ вăтам пĕлӳ илни çинчен патшалăх дипломне параççĕ.

Çар вĕрентĕвĕн заведенийĕнчен вĕренсе тухнисен уйăхри вăтам ĕç укçи шайĕ 35 тенкĕрен 50 пин тенкĕ таран пулать. Унăн виçи мĕçе çул службăра пулнипе (выслуга), должноçпа, хăш вырăнта служба тивĕçне пурнăçланипе çыхăннă.

Кандидатсем тĕлĕшпе требованисем çакăн пек. Ӳсĕм шайĕ – 19 çултан тытăнса 24 çулчен, Раççей çар службинче пулни, контрактпа службăра тăма сывлăх тивĕçтерни, судпа айăпланманни.

Заявленисене 2012 çулхи майăн 1-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Хăвăра интереслентерекен пур ыйтусемпе те Чăваш Республикинчи Çар комиссариачĕн Муркаш тата Элĕк районĕсенчи пайне пыма пултаратăр. Адресĕ: Муркаш ялĕ, Гагарин урамĕ, 10-мĕш çурт. Шăнкăравласа пĕлмелли телефонсем: 62-1-89, 62-0-58, 62-7-01.

**А. ПРОСКУРОВА,**
**çар комиссариачĕн пайĕн пуçлăхĕн гражданскине контрактпа çар службине кайма пухас енĕпе пулăшаканĕ.**

Райадминистрацире

# Хисеп грамотипе наградăланă

***Çитĕнекен ăрăва вĕрентсе воспитани парас тĕлĕшпе тунă çитĕнӳсемшĕн тата нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн район администрацийĕн 2012 çулхи январĕн 17-мĕшĕнчи 38 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:***

– **Татьяна Петровна АЛЕКСЕЕВĂНА**, Орининти пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул директорĕн воспитани парас енĕпе ĕçлекен çумне;

– **Валентина Степановна АНИСИМОВĂНА**, 29-мĕш номерлĕ «Незабудка» ача сачĕн воспитательне.

***Çитĕнекен ăрăва вĕрентсе воспитани парас тĕлĕшпе тунă çитĕнӳсемшĕн тата нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн район администрацийĕн 2012 çулхи январĕн 24-мĕшĕнчи 54 № йышăнăвĕпе*** Юнкăри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулăн пуçламăш классен учительне **Елена Григорьевна ЯНДУШКИНĂНА** район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

Право ыйтăвĕсемпе

# Юридици пулăшăвĕ камсемшĕн тӳлевсĕр?

***Çыннăн юридици пулăшăвĕ илмелли правăна Раççей Федерацийĕн Конституцийĕнчех çирĕплетсе хунă. Конституцин 48-мĕш статйинче ăнлантарса панă тăрăх, кашниех квалификациллĕ юридици пулăшăвĕ илме пултарать. Саккунпа пăхнă уйрăм тĕслĕхсенче вара юридици пулăшăвĕпе тӳлевсĕрех тивĕçтермелле.***

Тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ парассин йĕркине «О бесплатной юридической помощи в Российской Федерации» Федераллă саккунра палăртнă. Асăннă саккун 2012 çулхи январĕн 15-мĕшĕнче вăя кĕчĕ.

Халĕ Раççей Федерацийĕн кирек хăш регионĕнче пурăнакан саккунра палăртнă категорие кĕрекен çын та тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕпе тивĕçтерекен патшалăх системинче пулăшупа усă курма пултарать. Кунпа пĕрлех вăл тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕпе тивĕçтерекен патшалăх шутланман система та пулма пултарать.

Унччен хипе танлаштарсан тӳлевсĕр пулăшупа усă курма пултаракансен йышне ӳстернĕ. Кусем вĕсем халĕ 1-мĕш тата 2-мĕш ушкăн инвалидĕсем, Аслă Отечественнăй вăрçă ветеранĕсем, Совет Союзĕн Геройĕсем, çемьен кашни членĕ пуçне тивекен тупăш пурăнма кирлĕ минимумран сахалрах тивекен çемье членĕсем, пурăнма кирлĕ минимумран пĕчĕкрех тупăш шайлĕ пĕччен пурăнакан граждансем, инвалид ачасем, тăлăх ачасем, ашшĕ-амăшĕн хӳтлĕхĕсĕр юлнă ачасем тата вĕсен саккунлă представителĕсем (енчен те вĕсем çакăн пек ачасен прависемпе саккунлă интересĕсене тивĕçтерес ыйтупа тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ ыйтаççĕ пулсан) т. ыт. те.

Уйрăм тĕслĕхсенче кун пек чухне право енĕпе тӳлевсĕр консультаци панисĕр пуçне анлăрах пулăшупа та тивĕçтерме пултараççĕ: уншăн çăхав, заявлени е право ыйтăвĕпе çыхăннă ытти документ çырса пама, çавăн пекех унăн интересĕсене судсенче, патшалăх тата муниципаллă органсемпе организацисенче хӳтĕлеме.

Хальхи вăхăтра Чăваш Республикин Юстици министерстви Чăваш Республикин «О бесплатной юридической помощи в Чувашской Республике» Саккун проектне çырса хатĕрленĕ. Вăл граждансене республика территорийĕнче тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ парассипе, ку ушкăна кĕрекен граждансен категорийĕсене палăртассипе çыхăннă.

**М. КУЗЬМИН,**
**Раççей юристсен ассоциацийĕн республикăри уйрăмĕн аппарачĕн ертӳçи.**

Вулавăшра

# Хастарсем кăмăла çĕклеççĕ

Районти тĕп вулавăшра халĕ 9 çын вăй хурать. Ку ушкăна Татьяна Королькова ертсе пырать. Унта ĕçлекенсем пурте таса чунлăскерсем, хăйсен ĕçне чун-чĕрепе парăннăскерсем.

Май çуккипе пур чухне те вулавăша кайма пултараймастăп. Çавна май кирлĕ кĕнекесене кăçал кăна миçе хутчен ĕнтĕ киле пырсах пачĕ Тамара Павлова. Вăл тăтăшах пырса çӳрет. Елена Романова вара тĕп вулавăшра çук кĕнекене Шупашкартан та тупса килме хатĕр. Çакă вăл вулакана сума суни, чун-чĕререн хисеплени мар-и-ха?

Акă эпĕ Федор Достоевский çырнă «Бедные люди» кĕнекине тахçанах тупса вуласшăнччĕ. Вулавăша телефонпа шăнкăравларăм кăна, кĕнекене пырса та пачĕç. Пысăк кăмăлпа вуласа тухрăм ăна.

Ялсенчи ытти вулавăш ĕçченĕсем те çавăн пекех туйăмлăскерсĕ мана. Çавна май пурне те вĕсене ырă сывлăх, ăнăçу, çынсен юратăвне сунас килет.

Эпĕ пĕлсех тăратăп: вулавăш пулнă, халĕ те пур, малашне те пулатех. Çавăнпа ку хастар ĕçченсене Турă сывлăх патăр.

**В. МОЖАЕВ.**

Муркаш ялĕ.

# Çур акине хатĕрленетпĕр

**РАЙОНТИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ХУÇАЛĂХСЕНЧЕ ÇУРТРИ ВĂРЛĂХĔН ПАХАЛĂХĔ МĔНЛЕ ПУЛНИНЕ КĂТАРТНИ**
**(нарăс уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне)**

**Колонкăсенче: 1. Тĕрĕсленĕ (центнерпа). 2. Кондицийллĕ вăрлăх (процентпа). 3. Кондицие ларман вăрлăх пĕтĕмпе. 4. Вăл шутран тасалăхпа. 5. Çум курăк вăррисемли. 6. Тырă алассипе ĕçлекен бригадăсем.**

| | 1 | 2 | 3 | 4 | 5 | 6 |
|---|---|---|---|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 1200 | 0 | 1200 | 1200 | 1200 | – |
| «Восток» | 1590 | 36 | 1019 | 1019 | 373 | – |
| «Герой» | 1694 | 57 | 733 | 591 | 591 | 1 |
| Ильич яч. хис. | 3300 | 45 | 1800 | 1800 | 1800 | 2 |
| ВТМ | 0 | 0 | 0 | 0 | 0 | – |
| «Путь Ильича» | 690 | 100 | 0 | 0 | 0 | 1 |
| «Моргаушская» | 0 | 0 | 0 | 0 | 0 | – |
| «Оринино» | 2207 | 80 | 439 | 439 | 439 | – |
| «Передовик» | 1196 | 100 | 0 | 0 | 0 | – |
| «Свобода» | 2472 | 73 | 658 | 658 | 658 | 1 |
| Суворов яч. хис. | 2030 | 67 | 670 | 420 | 280 | 1 |
| «Ударник» | 2788 | 100 | 0 | 0 | 0 | – |
| Чапаев яч. хич. | 1450 | 100 | 0 | 0 | 0 | 1 |
| Чкалов яч. хис. | 1150 | 0 | 1150 | 1150 | 1150 | – |
| «ДаАн» | 500 | 0 | 500 | 500 | 500 | – |
| «Колос» | 850 | 100 | 0 | 0 | 0 | – |
| Мичурин яч. хис. | 891 | 11 | 791 | 791 | 791 | – |
| КФХ Толстов А. И. | 500 | 0 | 500 | 500 | 0 | – |
| КФХ Бархаткин В. В. | 1300 | 46 | 700 | 700 | 700 | 1 |
| ООО «Гея» | 400 | 0 | 400 | 400 | 400 | – |
| ООО «ВаСем» | 1020 | 0 | 1020 | 1020 | 1020 | – |
| КФХ Трепнев А. А. | 700 | 100 | 0 | 0 | 0 | – |
| КФХ Сретинский С.К. | 0 | 0 | 0 | 0 | 0 | – |
| КФХ Горбунов | 600 | 50 | 300 | 300 | 300 | – |
| «Бездна» | 250 | 60 | 100 | 100 | 100 | – |
| **РАЙОНĔПЕ** | **28780** | **58** | **11980** | **11980** | **9802** | **8** |

Çулла – çуна, хĕлле урапа хатĕрлеме хушнă ваттисем. Çак сăмахсенче – ĕçсен вăр-варлăхĕ, вĕсене вăхăтра пурнăçлани тата маларахах пысăк тухăç никĕсне хывса хăварни. Çулталăкăн пĕрремĕш уйăхĕ иртсе пырать. Сисмĕпĕр те – çур аки ума тухĕ. Çав ответлă тапхăра эпир уйрăмах паха вăрлăх янтăлассипе паян епле хатĕрленетпĕр-ха? Хуравĕ çӳлерех илсе кăтартнă таблицăран аван курăнать. Вăрлăхăн пысăк пайĕ тасалăхпа ака кондицине ларманни хуçалăхсем гербицидсемпе япăх ĕçленине тата вырма вăхăтĕнче йĕтемсем çинчи ĕçе япăх йĕркеленине кăтартать. Паян вара хывса хăварнă вăрлăх çĕр ĕçченĕн чунне тивĕçтереймест. Çав вăхăтрах паян хуçалăхсем вăрлăх улăштарассипе те çителĕксĕр ĕçлеççĕ-ха. Ку ĕçе те кая хăварас марччĕ.

Кондицийллĕ вăрлăх 59 процента çитрĕ. Çав вăхăтрах «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикипе А. Трепнев ертсе пыракан хресчен (фермер) хуçалăхĕнче тата «Гея» чикĕллĕ яваплăхлă обществăра янтăланă вăрлăх пĕтĕмпех ака кондицине тивĕçтерет пулсан, çакă вăрлăх хатĕрлессипе пурте çывăрманнине çирĕплетет. Кун çумне «Свобода» хуçалăх Чĕмпĕрти ял хуçалăх наука институтĕнчен «конкор» сĕлĕпе çурхи тулăн «эскада-70» сортне кӳрсе килни те малашлăха пăхакансем вăрлăх пахалăхĕ пирки çиччĕ виçнине çирĕплетет.

Çур еннелле сулăнтăмăр пулин те çанталăк уяр та хитре, ăшă тăрать. Ку вăхăт вăрлăх аласа ăна кондицие лартма питех те меллĕ. Пĕлтĕр çак тапхăра кондицийллĕ вăрлăх хуçалăхсенче 79 процент пулнă пулсан, кăçал ку енпе ĕçлемелли уйрăмах чылай иккенни куç умне тухать. Çакна ăнланса паян вăрлăх алас ĕçсем Ильич яч. хис., «Герой», Чапаев яч. хис., Чкалов яч. хис., Суворов яч. хис., «Свобода» пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе В. Бархаткин тытса пыракан хресчен (фермер) хуçалăхĕнче кăна пыраççĕ.

Умра тăракан тепĕр ыйту вăл – элитăллă паха вăрлăх туянасси. Ăна хамăр районтах туянма пулать: Ильич яч. хис. хуçалăхра урпан «Владимир», В. Бархаткинăн хресчен (фермер) хуçалăхĕнче урпан «эльф», «Герой» хуçалăхра сĕлĕн «гунтер» тата урпан «тандем» сорчĕсем пур. Çакна валли асăннă хуçалăхсемпе маларах калаçса татăлмалла кăна. Кунсăр пуçне паха вăрлăха Чăваш Республикин апат-çимĕç фондĕнчен, «Приволжский» вĕрентӳ хуçалăхĕнчен, ял хуçалăхĕн Чĕмпĕрти, Мускаври наукăпа тĕпчев институчĕсенчен туянма пулать. Çак çулпа кайса пĕр тонна паха вăрлăх акса ӳстерсен 2 çул хушшинче хуçалăхри вăл е ку культурăн пĕтĕм вăрлăхне элитăна лартма пулать.

Паян районта элитăллă вăрлăх пурĕ 13,4 процент. Массăллă тата сортсăр вăрлăх – 28,4 процент. Хальхи вăхăтра «Вăрлăхпа ĕçлесси çинчен» федераллă саккунпа килĕшӳллĕн кунашкал вăрлăха пачах акма юрамасть.

Çур акичченхи вăхăтпа хуçалăхсенче туллин усă курса юласса, тивĕçлĕ йышăнусем тăвасса шанас килет.

**А. ПОПОВ,**
**«Россельхозцентр» филиалăн районти пайĕн пуçлăхĕ.**

## Поправка

| № п/п | Фамилия, имя, отчество зарегистрированного кандидата | Даты размещения предвыборных агитационных материалов, полоса и место на полосе | Площади, выделяемые для агитационных материалов |
|---|---|---|---|
| Кадикасинский одномандатный избирательный округ №9 | | | |
| 1. | Иванов Юрий Александрович | 18 февраля 2012 года, 2 полоса, место 1 | 312 кв.см |
| 2. | Мочалов Эдуард Валерьевич | 18 февраля 2012 года, 2 полоса, место 3 | 312 кв.см |
| 3. | Ямангеев Владимир Владиславович | 18 февраля 2012 года, 3 полоса, место 2 | 312 кв.см |
| 4. | Сергеева Любовь Петровна | 18 февраля 2012 года, 2 полоса, место 2 | 312 кв.см |
| 5. | Крючков Василий Александрович | 18 февраля 2012 года, 3 полоса, место 1 | 312 кв.см |

# Пай хуçи пулма саккуна пăхăнмалла

## Çĕр хуçисем валли кăларнă саккун

*Çулталăк каялла, 2010 çул вĕçĕнче, Раççей Президенчĕ Д. Медведев «Ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсен çаврăнăшне лайăхлатасси çинчен» саккуна ĕçе кĕртме алă пуснăччĕ. Мĕнле улшăнусем пулса иртрĕç унтанпа? Саккуна пурнăçа кĕртессипе туса ирттернĕ ĕçсем пирки Чăваш Республикин пурлăхпа çĕр хутшăнăвĕсен министрĕ Светлана Енилина каласа пама кăмăл турĕ.*

**– Светлана Александровна, хаçат вулакансене ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсен çаврăнăшне лайăхлатассипе саккуна çĕнĕлĕхсем кĕртнипе паллаштарăр-ха. Çулталăк ытларах каялла ĕçлеме пуçланă саккун уйрăм граждансене тата республикăна пĕтĕмĕшле мĕнле çăмăллăхсем пачĕ?**

– Район хаçатне саккунсенчи çĕнĕлĕхсемпе вулавçăсене паллаштарсах тăнăшăн пысăк тав. Республикăри çĕр ĕçченĕсемшĕн ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсемпе ĕçлесси тата кунти улшăнусемпе тан пырасси кун йĕркинче малти вырăна тухрĕ.

Малтанах çакна калам. Паян калаçу никĕсне илнĕ саккун граждансене ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсенчен çĕр пайĕсем шучĕпе уйăрса илнĕ çĕр участокĕсене хăйсен прависемпе усă курса патшалăх регистрацине тăратма çăмăлрах условисем туса парать. Çĕре регистрацилени граждансене унпа эффективлăрах усă курма çул уçать. Çĕр хуçисем вĕсемпе хăйсем усă курайраççĕ, арендăна парайраççĕ, сутайраççĕ, парнелейреççĕ т. ыт. те.

Маларах каланипе пĕрлех асăннă саккун Чăваш Республикин территорийĕнче агропромышленность комплексне аталантарма нумай вăхăтлăх кредитсем илме салук базине йĕркелеме те вырăнлă. Çак çулпа кайса усă курман çĕрсене ял хуçалăхĕнчи пусă çаврăнăшне кĕртме, çĕр хутшăнăвĕсенче йĕрке тума, ял хуçалăх çĕрĕсемпе эффективлăрах усă курассине вăйлатма майсем вăй илеççĕ.

**– Саккуна хатĕрленĕ чух вăл çĕр пайĕсем тĕлĕшпе пур правасене регистрацилессине ырă енне улăштарать тени пурччĕ. Калăр-ха, тархасшăн, тӳрре килчĕç-и вĕсем?**

– Ĕмĕтленни тӳрре килчĕ темелле. 2011 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕ тĕлне çĕр пайĕсене 136,9 пин гектар çинче патшалăх регистрацийĕ тунăччĕ. Çак çăмăл мар ĕç çулталăк хушшинче 195 гектартан иртрĕ.

Çĕр пайĕсен шучĕпе йĕркеленнĕ çĕр участокĕсене патшалăх регистрацине тăратассипе Улатăр, Канаш, Красноармейски, Пăрачкав, Вăрмар, Шупашкар, Шăмăршăпа Елчĕк районĕсенче çанă тавăрса ĕçлерĕç. Ку тăрăхсенче пай харпăрлăхĕнчи çĕрсен 45 процентне регистрациленĕ ĕнтĕ.

**– Светлана Александровна, муниципаллă влаç органĕсем çынсене çĕр участокĕсемпе тĕллевлĕ усă курасси пирки темĕн чуль каласан та йĕркене пăсакансем пурпĕрех тупăнаççĕ. Вĕсем çĕрĕсем çинче хăйсем те ĕçлемеççĕ, çав вăхăтрах хăйсем валли пăхнă лаптăксенчен ютшăнасси пирки те пĕлтермеççĕ. Çĕнĕ саккун кун пек «хуçасем» пирки яваплăх пăхать-и?**

– Эсир каланă çĕр «хуçисене» ответ тыттарассине те пăхса хăварнă. 2011 çулхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕнчен яваплăх виçине ӳстернĕ те. Ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕр лаптăкĕсемпе саккунпа пăхнă вăхăтра ĕçлеме пуçламасан вĕсен хуçисем административлă майпа ответ тытаççĕ. Усă курман çĕр хуçисем уйрăм граждансем пулсан, вĕсем тĕлĕшпе 2–5 пин тенкĕ штраф пăхса хăварнă. Должноçри яваплă çынсем çĕрпе усă курманнишĕн 4–6 пин тенкĕлĕх, предприяти-организацисем – 80–100 пин тенкĕлĕх явап тытĕç.

**– Штрафсен виçине пăхмасăр çĕр лаптăкĕсене çум айĕнче тытакансемпе мĕнле пулмалла? Кунашкал граждансенчен çĕре туртса илессине саккунпа пăхнă-и?**

– Çăмăл мар ыйту хускатрăр. Анчах ун çине те саккунта хуравĕ пур. Ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕр лаптăкĕсемпе саккунпа пăхнă вăхăтра ĕçлеме пуçламасан вĕсен хуçисенчен ăна саккунпа килĕшӳллĕ туртса илесси те кун йĕркинче пур. Çĕр хуçи хăйĕн çĕр лаптăкĕпе ял хуçалăх производстви валли усă курмасть пулсан тата çĕре харпăрлăха илнĕренпе виçĕ е ытларах çул ял хуçалăхĕпе пăхнă ытти ĕçсемпе ĕçлет пулсан çав çĕр лаптăкне суд йышăнăвĕпе туртса илме ирĕк пур.

Çĕр участокĕпе çĕр саккунĕсене пăсса усă курсан тата çакнашкал ĕç-хĕл çĕр пулăхлăхне чакарсан е экологи лару-тăрăвне начарлатсан та суд йышăнăвĕпе çĕр лаптăкне туртса илме пултараççĕ. Çак нормăсене иртнĕ çулхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕнче вăя кĕнĕ 435-мĕш федераллă саккунта пăхса хăварнă.

**– Хуçи усă курман çĕр участокĕсене йышăнман çĕр тесе калама пулать-и?**

– Усă курман çĕр участокĕсене саккун пăхнă тĕслĕхсенче çеç йышăнман çĕр тесе калама пулать. Харпăрлăх правипе вăл е ку гражданинăн çĕр лаптăкĕ тесе шутланакан участоксене хуçи 3 е ытларах çул хăй усă курмасан е арендăна памасăр ĕçсĕр вырттарсан ăна йышăнман çĕр участокĕ тесе калама пултараççĕ.

Çавнашкалах вырăнти самоуправлени органĕсен ял хуçалăх çĕрĕсене приватизацилени пирки калакан йышăнăвĕсенче харпăрлăх хуçи пирки паллă мар пулсан тата çĕр лаптăкĕн хуçи вилнĕ хыççăн унăн еткерçисем пулмасан çав çĕр участокĕсене йышăнман çĕр участокĕсем тесе палăртайраççĕ.

Палăртса хăвармалла. Йышăнман çĕр участокĕсене, вĕсемпе эффективлă усă курас тĕллевпе, çирĕплетнĕ йĕркепе ял тăрăхĕсен харпăрлăхне регистрацилемелле. Паянхи куна йышăнман çĕр участокĕсене 1,3 пин гектар çакăн пек харпăрлăха регистрациленĕ те.

**– Светлана Александровна, çĕр пайĕсен прависене регистрацилессипе патне таврăнар. Калăпăр гражданин çĕр лаптăкĕ тĕлĕшпе пур правăпа усă курас терĕ. Мĕн тумалла-ха унăн малтанах?**

– Кашниех хăйĕн çĕр правине регистрацилессине çак ыйтуран пуçлать. Малтанах вăл е ку гражданинăн çĕр пайĕпе хăй тĕллĕн çеç е ытти пайçăсемпе пĕрле усă курассипе ыйтăва татса памалла.

Çĕр лаптăкне ытти пайçăсемпе пĕрле уйăрса илес шутлă гражданинăн ял тăрăхĕн вырăнти самоуправлени органне ытти пайçăсемпе пĕрлехи пуху ирттерес ыйтупа тухмалла. Вырăнти самоуправлени органĕ çак пухăва йĕркелет. Пухура пайçăсем çĕр виçес проекта тăвассине йышăнаççĕ. Пухурах пайçăсем малашне çĕр тĕлĕшпе документсем тунă чух хăйсен интересĕсене хӳтĕлеме уполномоченнăй суйласа хăвараççĕ. Уполномоченнăй çĕр виçес проекта хатĕрлеме кадастр инженерĕпе килĕшӳ тăвать. Тепĕр пухура пĕрлехи пай харпăрлăхĕн хуçисем çĕр виçес проекта çирĕплетеççĕ те кадастр инженерĕ кадастр ĕçĕсем ирттерет.

Енчен те çĕр харпăрлăхĕн хуçи хăй тĕллĕн уйăрăлса тухас терĕ пулсан çӳлерех асăннă ĕçсене хăй ячĕпе ирттермелле.

**– Çĕр виçнин планне алла илсен гражданинăн мĕн тумалли юлать?**

– Унăн çĕр лаптăкне патшалăх кадастр учетне тăратма Чăваш Республикинчи «Кадастр палати» федераллă бюджет учрежденине каймалла. Алла кадастр паспортне илсен Чăваш Республикин патшалăх регистраци, кадастр тата картографи управленине кайса çĕр участокĕ тĕлĕшпе харпăрлăх правине регистрацилемелле. Çакăн хыççăн тин вăл хăй ячĕпе илнĕ çĕр пайĕн чăнчăн хуçи пулса тăрать.

**А. ПЕТРОВ калаçнă.**

## Вут-кăвар алхаснă

# Электричество шӳтлемест

Кил-çуртра пушар тухни нумай чухне унран сыхланмалли правилăсене пăхăнманнинчен пуçланать. Пуçланать те 100-шер пин тенкĕлĕх е ытларах та пурлăха самантра кĕл тăвать. Кайран вара чавса çывăх та çыртма çук.

Çапла пулса тухнă та нарăс уйăхĕн 3-мĕшĕнче каçхи 21 сехет тĕлĕнче Мăн Сĕнтĕр салинчи С. Седлова хуçалăхĕнче. Пушă ларакан йывăç çуртпа тахçантанпах усă курман пирки кил хуçи унта кĕртнĕ электричество пралукĕсене улăштарман, сӳнтермен. Çак кун «ватăлнă» электричество линийĕнчи кĕске замыкани кил хуçалăха «хĕрлĕ автан» илсе кĕрет. Мăн Сĕнтĕрти тата Муркашри пушар хурал машинисем вăхăтра çитнипе çулăма инçе сарăлма памаççĕ. Çапах пурăнмалли çуртăн çивиттийĕ юрăхсăра тухать.

Çак кун дежурствăра пулнă пушар хурал сменин Мăн Сĕнтĕрти инкеке çăварлăхласа таврăннă-таврăнман Шетмĕпуç ял тăрăхĕнчи Катăкуй ялне тухмалла пулать. Кунта та электричество приборĕпе усă курнă чухне пушар хăрушсăрлăх правилисене пăснипе Ю. Чернова хуçалăхĕнче пушар тухнă. Вăй илнĕ «хĕрлĕ автан» мунчапа ампара, сарайпа гаража юрăхсăра кăларать. Инкек татах та пысăкрах пулма пултарнă. Анчах Муркашри 37-мĕш номерлĕ пушар чаçĕнчи çăлавçăсем çитни пурăнмалли çурта сыхласа хăварма май панă.

Иртнĕ шăмат кун, нарăсăн 4-мĕшĕнче, Москакассинчи пĕр хуçалăхра мăрье юсавсăррипе тухнă пушарта мунча кĕлленни те пушар хăрушсăрлăх правилисене кирек хăçан та çирĕп пăхăнмалли пирки аса илтерет.

Асăннă тĕслĕхсем хыççăн кăçал район территорийĕнче 8 пушар тухни, ирĕке кайнă вут-çулăмра пĕр çын пурнăçĕ татăлни паллă. Иртнĕ çул çак вăхăтра тухнă 7 инкекре 2 çын пурнăçĕ вăхăтсăр татăлнăччĕ. Пĕр çын-и е иккĕ, анчах çухатусем çав-çавах шухăшлаттараççĕ.

**А. ЕФИМОВ,**
**патшалăх пушар надзор районти пайĕн пуçлăхĕн ĕçĕсене туса пыраканĕ.**

## Миграци служби пĕлтерет

# Суйлава кайма та паспорт кирлĕ

Саккунсем улшăнни Раççей гражданĕсене Тăван çĕршыв паспорчĕпе усă курасси, хăй пурăнакан вырăнта регистрациленесси тата унтан тухасси çине те çĕнĕлĕхсем кĕртет. Раççей Президенчĕн çывхаракан суйлавĕ те паспорт ыйтăвне иккĕмĕш вырăнта тытмасть. Пуш уйăхĕн 4-мĕшĕнче суйлава каяканăн çак кун хăй пурăннă вырăнта регистрациленнине çирĕплетекен, усă курмалли вăхăчĕ тухман паспорт çумра пулмалла. Апла пулсан суйлав кунĕ çывхариччен Муркаш ен çыннисен хăйсен паспорчĕсене алла илсе пăхмалла: вăл е ку сăлтавпа юрăхсăра тухман-и вĕсем?

Эпир хамăр патăмăра килекен кашни гражданинăн ыйтăвнех вăхăтра та туллин тивĕçтерме тăрăшатпăр. Анчах çĕнĕ паспорт илес е пуррине улăштарас ĕç пĕр-икĕ сехет хушшинче татса памалли ыйту мар. Çавăнпа та суйлав çывхариччен унта хутшăнма ирĕк пур гражданин хăйĕн паспорт ыйтăвне маларах татса пани ăна РФ Конституцийĕпе пăхнă правана саккунлă пурнăçлама çул уçать.

Паспорт – Раççей гражданинĕн тĕп документĕ. Апла пулсан ăна граждансене вăхăтра парса-улăштарса тата килен-каянсене регистрацилесе тăракан РФ федераллă миграци службин ЧР управленийĕн районти территори пункчĕ туса ирттерекен ĕçĕн пирĕн обществăри тӳпи те пысăк. Кун хыççĕнче вара конкретлă çынсен ĕçĕ-хĕлĕ тăрать.

Суйлава хутшăнмалли çыннăн паспорт илме мĕнле ĕçсем туса ирттермелле-ха? Çакăн пирки кĕске ăнлантару тăвас тетĕп. Малтанах паспорт илме ыйтса заявлени çырмалла. Паспорт илме хатĕрленекенĕн Раççей гражданстви пуррине ĕнентерекен документ, патшалăх пошлини тӳленин квитанцийĕ, 37Х47 миллиметр калăпăшлă тĕслĕ сăн ӳкерчĕксем кирлĕ пулаççĕ.

Асăннă хутсене РФ федераллă миграци службин ЧР управленийĕн районти территори пунктне çитерсен сире вĕсене йышăнни пирки справка паратпăр. Çакăн хыççăн паспорт 10 кун хушшинче хатĕр пулать.

Раççей гражданинĕ 20 е 45 çул тултарчĕ пулсан унăн 30 кун хушшинче паспорт улăштарма документсем тăратмалла. Ахальлĕн административлă майпа явап тытма тивĕ.

Суйлав кунĕччен вăхăт пурха. Çавăнпа та унпа туллин усă курни саккунпа килĕшӳллĕ пурăннине пĕлтерĕччĕ.

**Л. ПЛЕЧОВА,**
**федераллă миграци службин районти территори пункчĕн пуçлăхĕ.**

Çамрăксен пĕрлехи информаци кунĕнчен

# Вĕренӳ, хавхалантару, суйлав... – пĕтĕмпех кăсăклантарать

***Çамрăксен патриот туйăмĕ мĕнле пуласси вĕсене ачаран мĕнле воспитани панипе çыхăннă. Тăван кил, тăван урам, тăван ял... Çакна пурне те пĕчĕкренех юратма, хисеплеме вĕреннĕ, несĕлсемпе, тăван кĕтес историйĕпе кăсăкланакан ачасем, паллах, тăван республикăна та, çĕр-шыва та юратаççĕ. Малашне вара хăйсен ĕçне те пахалăхлă пурнăçлакансем пулаççĕ.***

Çапла ӳсме вара ачасем валли ача сачĕсенче те, шкулсенче те халĕ майсем чылай. Районта та тĕрлĕ программăсем пурнăçа кĕрсе пыраççĕ. Кун пирки район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн пуçлăхĕ З. Дипломатова информаци кунне пухăннă çамрăксене тепĕр хут аса илтерчĕ. Анчах та Шупашкарпа çывăх вырнаçнăран тата ĕç тупас ыйту çивĕч тăнăран çамрăксем хуларах юлма тăрăшаççĕ. Çемье çавăрнă, алăра пĕр е икĕ пĕчĕк ача пулсан та çул Шупашкараллах выртать мĕн. Ачан садика çӳремелли вăхăчĕ çитнĕ, анчах та унăн çӳреме май çук пулсан та, унта компенсаци параççĕ-çке-ха. Çак самантпа çыхăннă ыйтусене те районта тĕрлĕ енлĕн татса пама тăрăшаççĕ. Анчах та çамрăксен хăйсен те тăрăшмалла. Акă ялта ĕçлесе пурăнакан çамрăк специалистсен пурнăç условийĕсене лайăхлатма майсем чылай. Ялти шкулсенче те май пур таран шкулчченхи ушкăнсем уçса пыраççĕ, Муркашри лицей вырнаçнă çурта реконструкцилесси те нумаях кĕттермĕ. Паллах, тӳрех пĕтĕмпех пулмасть.

Активлă та пуçаруллă çамрăксем вара тĕрлĕ хавхаланăва тивĕçеççĕ: шкул шайĕнчисене кăна мар, çĕршыв шайĕнчисене те. Акă шкулсенчи çарпа патриот клубĕсем хăйсене яланах ырă енчен кăтартса параççĕ. Муркашри вăтам шкул çумĕнчи «Родина» клубран «тухнисем» чылайăн малашнехи пурнăçа çарпа çыхăнтарма шутланисен ретĕнче. Вĕсем – ыттисемшĕн тĕслĕх. Районта кадет класĕ пурри, Юнкăри тата Калайкассинчи вăтам шкулсенчи çамрăк космонавтсен отрячĕсем хавхаланса ĕçлени, геройсене, хĕрӳ вырăнсенче пуç хунисене асăнса ирттерекен тĕрлĕ мероприяти – пĕтĕмпех усăллă.

Районти ветерансен канашĕн ертӳçи М. Виноградова çамрăксене патриотла воспитани парассинче ветерансемпе тачă çыхăнса ĕçлеме сĕнчĕ. Ĕç ветеранĕ-и, вăрçă ветеранĕ-и – Чуманкассинчи вăтам шкулта вĕренекенсем çак туслă çыхăнăва тахçанах йĕркелесе янă. Тăтăш тата тĕрлĕ енлĕ пулăшу кӳреççĕ ачасем ватă çынсене. Шкулти çамрăк педагогсен канашĕнчи Н. Мясникова учитель шкулти опытпа паллаштарчĕ.

Калаçу обществăлла ĕç пирки те пулчĕ. Çак ĕçе хутшăнакан çамрăксем – волонтерсем – нумайланса пыни те лайăх пулăм. Сăмах май каласан волонтер кĕнеки пурри ĕç кĕнеки пуррипе танах: ăçта тата мĕн ĕçленине çырса хунине пичетпе çирĕплетеççĕ. Кайран вара пĕр-пĕр конкурса хутшăнас пулсан çак кĕнеке пысăк пулăшу кӳме пултарать. Кун пирки çамрăксемпе ĕçлекен специалист Е. Чернова тĕплĕн каласа пачĕ. Вырăнсене те çак информацие вăхăтра тата тĕрĕс çитерессе шанмалла: ял тăрăхĕсенчен, çамрăксен канашĕсенчен пухăннă çамрăксем – чи активлисем.

Патриотла воспитани пирки калаçнă чух çар тематикине шута хумасăр май çук. Районти призыв кампанийĕ мĕнле пынипе, çартан пăрăнакансем пирки те, çара контракт мелĕпе каякансем пирки те калаçу пулчĕ. Çар çыннисен ĕç укçи пирки тата ытти çăмăллăхсем пирки ыйтсан ЧР Çар комиссариачĕн Муркаш тата Элĕк районĕсен пайĕн специалисчĕ К. Терентьев «рядовойăн – 25 пин тенкĕ» тени залра пухăннисене пĕр шухăш патне илсе пычĕ: акă вăл – ĕç тата уйăхсерен парса тăракан ĕç укçи, кунсăр пуçне тата ытти çăмăллăхсем.

Çамрăксем çитес суйлавран айккине тăрса юлма шутламаççĕ. Кунта пухăннисем пĕр иккĕленмесĕрех суйлава каясси пирки пĕлтерчĕç. Паянхи тăнăçлăха ним тусан та «хутаçри кушакпа» ылмаштармаççĕ вĕсем. Суйлав пирки район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Л. Тарасова, Шупашкар хула депутачĕсен Пухăвĕн депутачĕ, пирĕн ентеш Г. Данилов та çамрăксемпе интереслĕ калаçу ирттерчĕç. Пĕтĕмлетӳ кĕттермерĕ: кашни çыннăн сасси пĕлтерĕшлĕ, çамрăксен – уйрăмах. Вĕсем-çке, ыранхи пурнăç хуçисем. Пăтранчăк тапхăр кирлĕ мар, паян пирĕн çĕр-шыв тĕнчере хăй вырăнне мăнаçлăн тытса тăрать. Çавăнпа та паянхине çухатас марччĕ, пурин те тĕрĕс, шухăшласа суйлава каясчĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

«Условник» операци

# Ачасене кашнин тимлĕхĕ кирлĕ

Шалти ĕçсен министерствин районти пайĕнче çул çитменнисемпе ĕçлесси çине яланхи пекех пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Мĕншĕн тесен ачасемпе çамрăксем йĕркене пăснă тĕслĕхсем пĕлтĕр палăрмаллах нумай пулчĕç – 26. Районти пайра пурĕ 43 çамрăк учетра тăрать. Кунсăр пуçне тата условлă майпа айăпланисем тăваттăн, судпа обязательнăй ĕçсем пурнăçлама çирĕплетнĕ тепĕр çамрăк наказание пурнăçлать. Çаксене пурне те тĕрĕслесе пăхса тăмалла.

Февралĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 10-мĕшĕччен ку тĕлĕшпе шăпах «Условник» операци пырать. Вăл профилактика ĕçĕн пĕр енĕ пулса тăрать. Çавăнпа та çамрăксемпе тĕл пулса калаçусем ирттерни, вĕсем нумайăн пухăнакан вырăнсене ятарлă рейдсемпе тухни – эпир кунсерен туса пыракан ĕç.

Çул çитменнисем йĕркене пăсасси ытларах чух çемьере епле лару-тăру пулнипе çыхăнса тăрать. Çавăнпа та районти йывăр лару-тăрулă çемьесене тăтăшах тухса çӳрессине те йăлана кĕртнĕ ĕнтĕ.

Профилактика ĕçĕ пирки каланă чух обществăлла воспитательсем пуррине те аса илтерес килет. Вĕсенчен ытларахăшĕ – ял тăрăхĕсенчи хисеплĕ çынсем. Хăйсене «шанса панă» ачана кашни кун тенĕ пекех кураççĕ. Калаçмасăр иртмелле мар, ачан пурнăçĕпе кăсăкланни никамшăн та ытлашши пулмĕ. Ялти Культура çурчĕсенче ĕçлекенсен те каçхи мероприятисем ирттернĕ вăхăтра унта пуçтарăннисем хушшинче çул çитменнисем пуррипе çуккине пĕлсе тăмалла. Унсăрăн саккуна пăхăнман тĕслĕхсемшĕн явап тытмалла пулать.

Çамрăксем йĕркене пăснă тĕслĕхе курсан ку манăн ача мар-ха тесе курмăш пулас марччĕ.

**И. ИГНАТЬЕВА,**
**çул çитменнисемпе ĕçлекен инспектор.**

Спорт тата сывлăх

# Аслисенчен тĕслĕх илмелле

Пирĕн районта сывă пурнăç йĕркине сарас, çынсене массăллă спорта явăçтарас тĕллевпе чылай ĕç туса ирттереççĕ. Акă юлашки çулсенче те çĕнĕ ăмăртусем иртме пуçларĕç.

Иртнĕ шăмат кун вара районта ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕ – «Сывлăх» ФСК-ра 40-рен иртнĕ арçынсем хăйсене волейбол вăййисенче тĕрĕслерĕç. Хутшăнакансене саламланă май район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев «çакăн пек вăйăсене спортсменсем тупса палăртассишĕн мар, пире пурне те сывă пурнăç йĕркине тытса пыни тата спортпа туслă пулни кăна сывлăхлă та ăнăçлă пулма май панине кăтартассишĕн йĕркелетпĕр» тесе питĕ тĕрĕс палăртнă. Çакă кашниншĕнех пĕлтерĕшлĕ пулмалла.

Ăмăртăва хутшăннă пилĕк команда – район администрацийĕн команди, Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăхăн команди (3-мĕш вырăн йышăннă), Ильинка ял тăрăхĕнчи ветерансен команди (2-мĕш вырăн) тата «Ударникăн» икĕ команди (пĕр команди – 1-мĕш вырăнта) – пурте çакна кăтартса пачĕç. Хăвăртлăхпа, çаврăнăçулăхпа ветерансем çамрăксенчен пĕрре те кая мар. Тĕслĕх илмелле вĕсенчен.

Каласа хăвармалла, район администрацийĕн командин йышĕнче республикăн патшалăх тĕп инженер инспекторĕ В. Димитриев та выляма кăмăл тунă.

Хĕрӳ те интереслĕ вăйăсем куракансене киленӳ вăхăчĕ парнеленĕ.

**Хамăр инф.**

# Акăлчан чĕлхине пĕлни усăллă

Шкулсенчен хыпарлаççĕ



Сăн ӳкерчĕкре: «Пĕрле шухăшласан хуравĕ те тĕрĕс пулĕ».

Январь уйăхĕн юлашки эрни Шурчари тĕп шкулта акăлчан чĕлхи эрни пулнипе палăрса юлчĕ. Мускав, Лондон хулисем çинчен, акăлчан чĕлхипе çырса кăларнă стена хаçачĕсем умĕнчен ачасем татăлмарĕç.

Эрне вăхăтĕнче кашни класрах интереслĕ ĕçсем туса ирттерме тăрăшрăмăр. 2 тата 4 классенче вĕренекенсем Дисней геройĕсемпе пĕрле тĕссене аса илчĕç, 3-мĕшсем хăйсен юратнă чĕр чунĕсем пирки КВН-ра шӳтлерĕç. Аслăрах классенче те уроксем вăйă мелĕпе иртни вĕренекенсене питĕ килĕшрĕ.

Юмахсем, сценкăсем, ӳкерчĕксен конкурсĕсем, сăвăсем, акăлчанла юрланă илемлĕ юрăсем – шкул ачисем тĕрлĕ енлĕ кăтартрĕç хăйсен пултарулăхне. Ачасем тĕрлĕ темăпа презентацисем те хатĕрлерĕç, эрне хушшинче вĕсем хăйсен пуçарулăхне, ответлăхне кăтартса пачĕç. Акăлчан чĕлхине пĕлни паян никамшăн та ытлашши мар, усăллă çеç.

**М. АЛЕКСАНДРОВА,**
**акăлчан чĕлхине вĕрентекен.**

Прогноз погоды

| Местное время | среда 8 февраля 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | четверг 9 февраля 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | пятница 10 февраля 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Облачность % | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | * | * * | * * | * | |
| Температура °C | -26 | -24 | -17 | -20 | -21 | -21 | -15 | -19 | -21 | -21 | -15 | -22 |
| Давление мм | 766 | 765 | 762 | 761 | 760 | 760 | 758 | 757 | 758 | 760 | 760 | 761 |
| Влажность % | 84 | 77 | 68 | 80 | 78 | 83 | 63 | 73 | 87 | 83 | 66 | 77 |
| Ветер м/сек | В 3 | В 2 | В 4 | В 4 | В 4 | В 3 | С-В 5 | В 4 | В 3 | В 1 | В 2 | Ю-В 2 |
| Солнце восход/заход | | 08:33 | 17:40 | | | 08:31 | 17:42 | | | 08:29 | 17:44 | |
| Луна восход/заход фаза | | 18:52 | 08:10 | | | 20:18 | 08:28 | | | 21:44 | 08:45 | |




В объявлении собственника земельной доли Иванова Николая Петровича о выделении земельного участка в счет земельной доли, опубликованного в райгазете «Çĕнтерӳ ялавĕ» от 20 января 2010 года в № 3 (7748) стр. 4, в последней колонке, допущена опечатка. Вместо «в восточной части» следует читать «в южной части».

Пĕлтерӳсем. Объявления

Февралĕн 10-мĕшĕнче
**Муркашри Культура çуртĕнче**
**Чăваш патшалăх филармонийĕн «Сеспель» эстрада ансамблĕн концерчĕ пулать. 18 сехет те 30 минутра пуçланать. Билет хакĕ 100 тенкĕ.**

**Молодая семья снимет квартиру на длительный срок в с. Моргауши. Тел.: 8-906-130-23-85, 8-953-016-93-03. 1-2.**

* * *

**Магазин «ОТДЕЛОЧНИК» реализует: ПВХ панели от 118 руб.; МДФ панели от 105 руб.; гипсокартон от 205 руб.; шпатлевки все виды; утеплитель «Техниколь» 650 руб.; сайдинг от 117 руб.; линолеум, монтажн. пены, двери и т. д. Адрес: с. Моргауши, ул. Гагарина, 2. Тел.: 8-903-322-59-69, 8-961-348-66-36. 1-10.**

* * *

**Продаем кирпичный дом с надворными постройками. Канализация, газ, вода в доме. Цена 2 миллиона 100 тыс. руб. Торг уместен. Тел.: 8-937-955-64-81.**

* * *

**Объявляется конкурс в народный ансамбль эстрадной песни «Расна» на вокалистку – сопрано, с хорошими вокальными данными. Кастинг состоится в Моргаушском РДК 10, 14 февраля в 12-00 часов. Тел.: 8-905-028-07-81.**

**ЛЕСОПТОРГ реализует пиломатериалы:**
**Доски: 50х100, 50х150, 50х200, 25х100, 25х150, 25х200 – 1 куб. м. от 5000 руб.**
**Изготовим сруб бани 3мх5м от 45000 руб. В наличии – сухие дрова.**
**Доставка бесплатно от 10 куб. м.**
**Тел.: 8-919-665-11-88, 8-905-343-91-07. 10-24.**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 6-10.**

Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru
Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Волкова А.И.
Пичете панă 07.01.2012 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4573.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.